ХЫПАР

# ТЕТТЕ
## ИГРУШКА

+0

5
2014




**Ӳркенмен ăста пулнă.**

**Кто не боится работы, тот становится мастером.**

Мария АРЛАН

# Шывăн хакĕ çук

Пĕчĕк Дима хăйĕн юратнă пăрăвне çырмари симĕс курăк çине илсе тухать. Кунта яланах ирĕклĕ. Тавралăхĕ те илемĕпе тыткăнлать. Пăрăвĕ ешĕл курăка çинĕ вăхăтра Дима çывăхри пĕве хĕррине чупса каять те вĕтĕ-вĕтĕ хумсене чылайччен сăнаса ларать. Шыв çийĕн сарă, шурă, хăмăр лĕпĕшсем ăмăртмалла вĕçсе иртеççĕ. Хĕвел пайăркисем çак вĕтĕ хумсем çинче çăлтăрсем пек çуталса йăлкăшаççĕ.

Хальхинче арçын ача сисмесĕрех тĕлĕрсе каять. Куç умне шупка кăвак тĕслĕ яштака пÿллĕ хĕр тухса тăрать. Унăн сенкер тÿпе тĕслĕ куçĕсенчен çăл куçран юхнă пек куççуль юхать. Ăна аллисенчи икĕ кăвак тутăрĕ те типĕтсе ĕлкĕрейместĕп. Вĕçĕмсĕр куççуль юхать...



– Аппа, эсĕ мĕншĕн çав тери макăратăн? – хĕрхенсе ыйтать Дима.

– Макăрмасăр чăтма та май çук, – йăвашшăн хуравлань вăл. – Иртенçÿрен юлашки вăхăтра тăтăшах кÿрентерет. Эпĕ кам пулнине чухлаймастăн та пуль-ха? Эпĕ – çак пĕве шывĕ. Кашни мĕнле те пулин çÿп-çап пăрахса хăварнăранах мана сывлама та йывăрланса çитрĕ, сăн-питĕм те илемсĕрленчĕ... Эсĕ ырă ача пулнине чунпа туятăп. Пулăшма хатĕррине те сисетĕп.

Çак хушăра пăру «Му-у-ук!» тесе сасă пачĕ. Тĕлĕрсе кайнă Дима васкаса ура çине тăчĕ. Ним тăвиччен чи малтан пĕве çине тинкерчĕ. Чăнах та унта пластик савăт-сапа, хăрăк туратсем ишсе çÿрени ăна çÿçентерчĕ.

«Çук, капла май килмест. Ним тăхтаса тăмасăр аслисемпе пĕрле инкеке лекнĕ пĕвене çăлмалла! Ăна васкавлăн тасатмаллах! – шухăшласа илчĕ вăл. – Кун пирки паянах вĕсене пĕлтерес!»

Панă сăмаха тытрĕ Дима. Аслисемпе тепĕр куннех çак вырăна çитрĕç те пĕвене тасатма тытăнчĕç. Ĕç кал-кал пынишĕн кашни савăнчĕ.

– Тавах сире пурне те. Эсир чăннипех те маттурсем, – чунтан хĕпĕртерĕ пĕве. Паян вăл каллех хĕвел шевлипе çуталса выртать. Ăна çÿпĕлекенсем те текех çук.

**Автор ÿкерчĕкĕ.**

## Ваттисем çапла калаççĕ:

- **Шыв тасана юратать.**
- **Шыв çине сурни çылăхлă.**
- **Шыв пек таса пул, çĕр пек пуян пул теççĕ.**
- **Шывпа çăкăр пулсан пурăнма пулать теççĕ.**
- **Шывсăр пурнăç çук.**

ТЕТТЕ
ИГРУШКА

# ХАВАСЛĂ УРОК
# ВЕСЁЛЫЙ УРОК

**Примера шутла та вир-вир кукамая (уяра) чечек патне çитме пулăш.**

**Реши пример и помоги бабочке-коробочке дойти до цветка.**




*Севиль МУСАЕВА*




**Примера шутла.**

**Реши пример.**

**Ӳкерчĕкре миçе хурт-кăпшанкă пытаннă-ши?**

**Сосчитай, сколько насекомых спрятано на рисунке?**



*Ксения КОШЕЛЕВА*

Элиза ВАЛАНС

# Хастар Мурка

Кахал кушак çури Мурка уйрăмах çуллахи куна килĕштернĕ. Ялан хĕвел çинче хĕртĕнсе выртма кăмăлланă.

– Шăллусемпе йăмăкусене тата сана пĕччен тăрантарайми пултăм. Килте эсĕ асли, çавăнпа кăштах мана пулăшасси çинчен шухăшламалла, – асăрхаттарчĕ пĕррехинче амăшĕ ăна.



– Анне, эпĕ ун пеккине пултараймастăп. Шăшине пĕр вырăнта кунĕпе сыхласа лар-ха, тен, вăл шăтăкĕнчен каçсăр та тухмасть, – хирĕçлерĕ кăмăлсăрланса.

Амăшĕ, Хăрăмпи, сăмах чĕнмесĕр пахчаналла тухса утрĕ. Çапла вăл çемьене тăрантарас тесе кунĕпе ларса канма пĕлмерĕ. Ывăлĕ çав вăхăтра йывăç сулхăнĕнче киленчĕ.

Пĕр кунхине амăшĕ чирлерĕ, вырăнпах выртрĕ. Ачисем выçăпа аптăрама тытăнчĕç. Кĕçĕннисем макăрашрĕç.

– Анн-е-е! Пар-ха мĕн те пулин çимелли-и-и, – тесе анратрĕ пĕри те тепри.

Хăрăмпи тĕпренчĕкĕсем çине шеллевлĕн пăхрĕ, анчах нимпе те пулăшаймарĕ.

...Мурка амăшне, шăллĕсемпе йăмăкĕсене хĕрхеннĕрен маттурланчĕ. Ир-ирех ухутана çӳреме тытăнчĕ. Çемьене тăрантараканĕ пулса тăчĕ. Амăшĕн тути те йăл кулчĕ савăннипе.

– Маттур, малашне йывăç сулхăнĕ мĕн иккенне манатăн ĕнтĕ, – терĕ ывăлĕ çине ăшшăн пăхса.

Çисе ярайман «пи-пи» шăшисене ытлашшине тусĕсене пачĕ. Лешсем те ахаль тумарĕç – велосипед туянма укçа пачĕç. Эх, мĕн тери хĕпĕртерĕ вăл! Яла çитсен хăй ярăнма пĕлменнине манса велосипед çине ларчĕ. Акă уменчи кустăрми чул муклашки çине лекрĕ те, вăл шыв кӳлленчĕкне кĕрсе ӳкрĕ. Кĕпи, шăлаварĕ йăлтах йĕпенчĕç. Пичĕ те хуралчĕ.

– Ах, велосипед туянни те ахалех пулчĕ-ши? – тесе уксахланă май кулянса утрĕ Мурка.

Шăп çак вăхăтра ăна хирĕç велосипедлă юлташĕсем ыткăнса килчĕç. Вăл шыва кĕрсе ӳкнине ăнлансан ахăлтатса кулчĕç. Унтан малалла вĕçтерчĕç.

– Пиçмен пашалу! – тесе йĕкĕлтешрĕç çитменнине.

Кăмăлĕ йăлт хуçăлчĕ Муркан. Унтан хăйне алла илчĕ.

– Ахалех кулатăр. Вĕрентсен упа та ташша хăнăхать. Акă курса тăрăр, манран та ăста спортсмен пулĕ-ха, – терĕ аяккалла тинкерсе.

Александр ПЛЕХАНОВ

# ХАВАСЛĂ УРОК
# ВЕСЁЛЫЙ УРОК

**Çитмен хисепсене пушă тăваткăлсене çырса тух.**

**Напиши недостающие числа в пустые клетки.**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 3 | 19 | 24 | 7 | 11 |
| 12 | | 17 | | 5 |
| 8 | 23 | 1 | 14 | 21 |
| 2 | 13 | | 16 | 9 |
| 15 | 6 | 10 | 18 | 4 |



**Лабиринт витĕр тух.**

**Пройди лабиринт.**



*Ксения КОШЕЛЕВА*

**Турткăш хӳрин чăн тĕкне туп.**

**Найди настоящее перо павлина.**

# Вăйă-кулă уçланки
# Игровая поляна

Кирлĕ паллăсем лартса примерсене шутла.

Поставь нужные знаки и реши примеры.




Кашни япалана хăйĕн тĕрĕс мĕлкипе çыхăнтар.



Соедини каждый предмет с правильной тенью.

Ӳкерчĕксенче мĕн çитмест? Вĕсене ӳкерсе пĕтер.

Чего не хватает на рисунках? Дорисуй.



*Ксения КОШЕЛЕВА*



**Йĕркесене малалла çырса тултар.**

**Найди закономерность и продолжи ряд.**




*Ксения КОШЕЛЕВА*

**Çак пухмачра хăш япала ытлашши?**

**Найди, какой предмет лишний?**










**Йĕркесене ăнлан та пушă клеткăсене кирлĕ цифра çыр.**

**Найди закономерность и напиши недостающие цифры.**

## Профессисем
## Профессии
## Professions
[прăфешнз]

**Тĕнчере интереслĕ тата усăллă професси нумай**
В мире много интересных и полезных профессий
There are many interesting and useful professions in the world
[Зер аа мени интристинг энд йуусфул прăфешнз ин зе вăăлд]

**Эпир ферма куратпăр**
Мы видим ферму
We see a farm
[Вии сии э фаам]

**Çăкăр пĕçерекен пире валли çăкăр пĕçерет**
Пекарь печет хлеб для нас
A baker bakes bread for us
[Э бейкă бейкс бред фор ас]



**Вĕрентекен пире вĕрентет**
Учитель нас учит
A teacher teaches us
[Э тиичă тиичис ас]

**Тухтăр больницăра ĕçлет**
Доктор работает в больнице
A doctor works in a hospital
[Э докă вăăкс ин э хоспитл]



**Почтальон пире хаçатсем, журналсем тата çырусем илсе килсе парать**
Почтальон приносит нам газеты, журналы и письма
A postman brings us newspapers, magazines and letters
[Э пăустмн брингз ас ньюспейпăз, мэгăзиинз энд лэтăз]






**Санăн аннӳ кам пулса ĕçлет? Вăл библиотекарь**
Кто твоя мама по профессии? Она библиотекарь
What is your mother. She is a librarian
[Вот из йо мазă? Ши из э лайбреăриăн]



**Санăн аçу кам пулса ĕçлет? Вăл пилот**
Кто твой отец по профессии? Он пилот
What is your fathe? He is a pilot
[Вот из йо фаазă? Хи из э пайлăт]

*Александр ПЛЕХАНОВ*

Акăлчан чĕлхи урокне Галина ЗОТОВА (Хĕрлĕ Чутай районĕ, Штанаш шкулĕ) ертсе пырать.
Урок английского языка ведет Галина ЗОТОВА (Красночетайский район, Штанашская школа).

# ПОЭТЫ – ДЕТЯМ

Альбина ЮРАТУ

## Чăх чĕпписем

*Икĕ пĕчĕк чăх чĕппи*
*Ăмăртса çиеççĕ тулă...*
*Мĕн амакĕ, мĕн йĕппи –*
*Шăмă-иç, выртать мăн пулă!*

*– Асăрхан, – тет тантăшне*
*Чăх чĕппи пит юратуллăн. –*
*Шăмă ларĕ пыр тĕпне,*
*Тек çиеймĕн тутлă пулă!*





## Асамат кĕперĕ

*Асамат кĕперĕ*
*карчĕ*
*Хĕвел-тусăм.*
*Тӳпере кавир*
*вăл сарчĕ –*
*Мерчен-пусăм.*

*Пĕлĕте вăййа вăл*
*чĕнчĕ –*
*Васкать çумăр.*
*Тӳперен ӳкет*
*пин ĕнчĕ –*
*Кулса кумăр.*

*Асамат хĕмне*
*çил пухрĕ –*
*Кĕсле хатĕр!*
*Сар чечек пуçне*
*ав ухрĕ –*
*Çулçи вĕлтĕр!*

*...Асамат кĕперĕн*
*тусĕ,*
*Ай, пулар-и?*
*Хĕвелпи,*
*илемлĕ эсĕ,*
*Ай, кулар-и?*

## Вĕлле хурчĕсем

*Вĕлле хурчĕсем сĕрлеççĕ*
*Ир-ирех сад пахчинче.*
*Ĕçчен тусăмсем пĕлеççĕ –*
*Пыл нумай çеçкесенче!*

*Хуртсем тăрăшса пухаççĕ*
*Тутлă-тутлă сĕткене.*
*Пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтараççĕ,*
*Вĕл вĕçеççĕ вĕллене.*

*Чечек пылĕ сар хĕвелĕн*
*Савăтра йăлтăртатать.*
*Пылак кученеç мехелĕн*
*Чунăма савăнтарать.*

*Кĕрхи кунсенче чирлемĕн,*
*Пухрăм вăй эп пыл çисе.*
*Пыл хурчĕсене парнелĕп*
*Çĕн вĕлле хĕм пек çиçсе.*



Александр ПЛЕХАНОВ


Владимир КОНОВАЛОВ
Старт
Иди на 3 хода вперед
3 куҫăм малалла кай

# Сӗтел ҫи вӑййи
# Настольная игра



Пирĕн пултарулăх

НАШЕ ТВОРЧЕСТВО

# Моя семья



Людей на свете много,
Так много, что не счесть.
Но среди них у каждого
Родные люди есть.

И у меня есть дружная
Любимая семья.
А это папа, мама, я,
Сестричка моя.

Любовью и заботой
Я дома окружен.
И сам всегда стараюсь
Послушным быть во всем.

Находятся идеи
Для отдыха, труда.
Когда родные рядом
Не скучно никогда.

Сажаем ли картошку,
Иль делаем ремонт,
Иль на зиму готовим
Варенье и компот.

Пасем коров у бабушки
В деревне иногда,
Ох, рано просыпаться
Приходится тогда!

Справляем дни рожденья,
Встречаем Новый год.
И возле елки водим
Дружный хоровод.

И если меня спросят:
«Дороже что всего?»
Отвечу, что семьи моей
Нет лучше ничего!

**Даниил ИГНАТЬЕВ.**
Вурнарский район,
поселок Вурнары, школа
№1 имени И.Н.Никифорова.

# Купăста

Купăста вăл
çĕр хут тăхăнать,
Купăста вăл
пире сывлăх парать.
Ачасем ăна пит юратаççĕ,
Çуркунне
ав лартса хăвараççĕ.

**Павел ГРИГОРЬЕВ.**




# Çуркунне

Урамра хĕвел пăхать,
Шурă юр та ирĕлет.
Симĕс курăкĕ тухать,
Ырă çуркунне килет.

**Вика АНТОНОВА.**
Шупашкар,
11-мĕш шкул.

Александр ПЛЕХАНОВ

# ХАВАСЛĂ УРОК
# ВЕСЁЛЫЙ УРОК



Самолетăн
чăн мĕлкине туп.

Найди настоящую тень самолета.

Пĕр-пĕринпе
çыхăннă япаласене
йĕр туртса
пĕрлештер.

Выбери пару к каждой вещи и соедини их линиями.







Пушă клеткăсенче хăш
паллă пулмалла?
Ӳкерсе пĕтер.

Что должно быть в пустых клеточках? Дорисуй.

Ксения
КОШЕЛЕВА

Пур фигурăна та
тăваткăлсене
вырнаçтарса тух. Кашни
йĕркере тата юпара
вĕсенчен пĕри кăна
пулмалла.

Расставь все предметы по квадратам так, чтобы в каждой строке и в каждом столбике был только один из них.





ФОТО КОНКУРС

# «НАШ ДРУЖНЫЙ КЛАСС» + «НАША ВЕСЁЛАЯ ГРУППА»



*Патăрьел районĕ, Туçа, "Сар хĕвел" ача сачĕ.*



*Шупашкар районĕ, Кӳкеç 1-мĕш шкулĕ.*



*Çĕнĕ Шупашкар, 12-мĕш ача сачĕ.*



*Шупашкар, 132-мĕш ача сачĕ.*




*Канаш районĕ, Çĕнĕ Чăлкасси шкулĕ.*



*Елчĕк районĕ, Шăмалак ача сачĕ.*




# «НАШ ДРУЖНЫЙ КЛАСС» + «НАША ВЕСЁЛАЯ ГРУППА»



Сĕнтĕрвăрри районĕ, Чăнкасси шкулĕ.



Патăрьел районĕ, Аслă Арапуç ача сачĕ.




Комсомольски районĕ, Тукай пуçламăш шкулĕ.



Куславкка районĕ, Тĕрлемес шкулĕ.



Елчĕк районĕ, Елчĕк шкулĕ.



Вăрмар районĕ, Кĕтеснер шкулĕ.



Комсомольски районĕ, Асанкасси шкулĕ.

# Хаваслӑ кӑранташ
## ВЕСЁЛЫЙ КАРАНДАШ



Лена НИКОЛАЕВА.
Канаш районӗ, Ҫӗнӗ Чӑлкасси.



Виола ПАНЮШКИНА.
Ҫӗнӗ Шупашкар, 12-мӗш ача сачӗ.



Крестина ГОРБУНОВА.
Шупашкар районӗ, Вӑрман Ҫӗктер шкулӗ.



Мария ФЁДОРОВА.
Вӑрнар районӗ, Вӑрнарти 1-мӗш шкул.



Никита ТИНЮКОВ.
Вӑрнар районӗ, Вӑрнарти 1-мӗш шкул.

# Хаваслă кăранташ

# ВЕСЁЛЫЙ КАРАНДАШ



*Егор НИКОЛАЕВ.*
*Элĕк районĕ, Чăваш Сурăм шкулĕ.*



*Дарья КСЕНОФОНТОВА.*
*Комсомольски районĕ, Хырай Ĕнел шкулĕ.*



*Толя НИКИТИН.*
*Муркаш районĕ, Сосновка шкулĕ.*



*Даша СМИРНОВА.*
*Çĕрпÿ районĕ, Опытнăй шкулĕ.*



*Валерия ЧЕРНОВА.*
*Елчĕк районĕ, Шăмалак шкулĕ.*

Сăрласа илемлет



# РАСКРАСКА

Севиль МУСАЕВА

# Сумочка




**_Вырежи развертку, согни по пунктирным линиям и склей сумочку. В нее можешь положить разные маленькие вещи. Успеха тебе, дорогой друг._**

*Тамара ФИНОГЕНТОВА*

# Пирӗн тӑрӑхри ӳсен-тӑран

**Шыв курӑкӗ – Кипрей.** Пирӗн тӑрӑхра унӑн сакӑр тӗсӗ тӗл пулать: ҫӑмлӑ шыв курӑкӗ, шурлӑх шыв курӑкӗ, ту шыв курӑкӗ, кӗрен шыв курӑкӗ, шӑнӑрлӑ шыв курӑкӗ, тӑрӑхлӑ ҫулҫӑллӑ шыв курӑкӗ... Вӗсем пурте нӳрлӗ вырӑнта ҫитӗнеҫҫӗ. Хӗрлӗхене те ӗлӗкрех шыв курӑкӗн ратне кӗртнӗ.





**Упа кӗпҫи – Дягиль лекарственный.** Икӗ тата нумай ҫул ӳсет. Ҫӳллӗшӗ 2 метр ҫурӑ пулать. Ҫулҫисем пысӑк. Юхан шывсем хӗррипе ҫитӗнет, шурлӑх таврашӗнче асӑрхама пулать, нӳрӗ вырӑна кӑмӑллать. Ҫӗртме-утӑ уйӑхӗсенче чечеке ларать. Ҫӗр айӗнчи пайӗпе медицинӑра усӑ кураҫҫӗ.

**Шӑнкӑрав курӑкӗ – Колокольчик.** Шӑнкӑрав курӑкӗн 350 тӗсӗ тӗл пулать. Пирӗн тӑрӑхра – 11 тӗс. Пыл паракан курӑк шутланать. Ҫӗртме-утӑ уйӑхӗсенче чечеке ларать. Шӑнкӑрав курӑкне Чӑваш Республикин Хӗрлӗ кӗнекине кӗртнӗ.



Александр ПЛЕХАНОВ

*Дорогие родители!*

*Подписку на журнал можно оформить с любого месяца, в любом отделении почты, киосках ОАО «Чувашпечать» и редакции.*

*Индексы 73771 (в республике) 11468 (за пределами республики)*

© «ТЕТТЕ - Игрушка»
Кӗҫӗн ҫулхи ачасен журналӗ
Журнал для детей дошкольного и младшего школьного возраста
На чувашском и русском языках
Индексы 73771 (в республике), 11468 (за пределами республики)
1994 ҫулхи ҫурла уйӑхӗнченпе тухать
Издается с августа 1994 года
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви; Чӑваш Республикин Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство ҫурчӗ» Чӑваш Республикин автономи учрежденийӗ.
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики; АУ Чувашской Республики «Издательский дом «Хыпар» Мининформполитики Чувашии.
5 (237) №, ҫу (май), 2014

Директор-тӗп редактор – А.ЛЕОНТЬЕВ
Шеф-редактор – В.ФЕДОРОВ
Компьютер дизайнӗ – Ф.ЧЕРНОВ
Наш адрес: 428019, г.Чебоксары, проспект Ивана Яковлева, 13, Дом печати. Телефоны: 56-00-67, 28-83-86
Наш сайт: www.hypar.ru. Электронная почта: tantas@list.ru
Журнал «Тетте-Игрушка» зарегистрирован Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00311 от 12.12.13 г.
Территория распространения — Чувашская Республика – Чувашия.
Цена свободная.
Журнал набран и сверстан в техническом центре ИД «Хыпар», отпечатан в типографии ГУП ЧР «ИПК «Чувашия» (428019, г.Чебоксары, проспект Ивана Яковлева, 13).
Подписано к печати 27.05.2014. Дата выхода в свет 31.05.2014.
Формат 60х84, Усл. п.л. 2,33.
Тираж 6343 экз. Заказ № К – 942.